Пирĕн интервью

# Тăван тавралăх илемĕшĕн

*Тăван кил, урам, ял, тăван тавралăх илемĕ кашнинĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен эпир унта çуралса ӳснĕ, унта пурăнатпăр. Хамăрăн тавралăх илемĕшĕн вара хамăрăнах тăрăшмалла. Кашниех çак ыйтăва тĕрĕс ăнланса чуна хывни кирлĕ. Ун чухне ăнăçусем те пулаççех.*

*Çулленех районта тирпей-илем кĕртессипе тĕрлĕ номинацисемпе конкурссем йĕркелеççĕ, çĕнтерӳçĕсене палăртаççĕ, парнесем парса хавхалантараççĕ. Район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ çак кунсенче район администрацийĕн çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен пайĕн тĕп специалисчĕпе, конкурссен комиссийĕн членĕпе Георгий Георгиевич СИМАКОВПА тĕл пулса конкурссен кăçалхи итогĕсемпе паллаштарма ыйтнă.*



**– Малтанах конкурссен комиссийĕн йышĕпе паллаштарсамăр.**

– Çавна калама пултаратăп. Комисси членĕсем пурте хăйсен тивĕçне ответлăха туйса пурнăçларĕç. Итогсене пĕтĕмлетнĕ май пур ыйтусене те тĕплĕн шута илме тăрăшрăмăр. Комисси шутĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин (комисси председателĕ), капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.В. Любимов (комисси председателĕн çумĕ), район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ О.И. Тимофеев, Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи Çĕнĕ Шупашкар хулинчи территори управленийĕн тĕп специалисчĕ Г.Г. Воробьева, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалисчĕ Н.Ф. Коннов, район администрацийĕн ял хуçалăхпе апат-çимĕç управленийĕн тĕп специалисчĕ А.И. Павлов, «Муркаш издательство çурчĕ» патшалăх унитарлă предприяти директорĕ-тĕп редакторĕ А.И. Тихонов.

**– Георгий Георгиевич, çак ыйту çине хурав илес килет. «Ялсене симĕслетесси тата тирпей-илем кĕртесси» номинаципе мĕншĕн никама та çĕнтерӳçĕсен шутне кĕртмен-ха?**

– Кун пирки çавна каласа хăварасшăн. Конкурс комиссийĕ вырăнсенче пулса курчĕ, вырăнсенчи лару-тăрупа паллашрĕ. Комисси йышăнăвĕпе вĕсенчен пĕри те конкурс условийĕсене тивĕçтермест тесе йышăннă. Çапла вара «Ялсене симĕслетесси тата тирпей-илем кĕртесси» номинаципе никам та мала тухман тесе йышăннă.

**– Конкурссем вара сирĕн татах сахал мар...**

– Социаллă сфера учрежденийĕсем хушшинчи ăмăртура Сыпайкасси шкулĕ паларчĕ, 3 пин тенкĕ парнене тивĕçрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Калайкасси шкулĕпе (2 пин тенкĕ) Мăн Сĕнтĕр шкулĕ (1 пин тенкĕ) тивĕçрĕç.

Çавна каласа хăварасшăн. Конкурссем конкурссемпе те, тăван тавралăх илемĕ, ырлăх-пурлăхĕ пирки манса каяс марччĕ. Ку вăл пĕтĕмпех хамăршăн вĕт. Çавăнпа та пурне те тăван тавралăха сыхлас ĕçе активлă хутшăнма чĕнес килет.

**– Георгий Георгиевич, «Чи лайăх пурăнмалли уйрăм çурт» номинацири конкурс пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Кунта та ыйтусем тухса тăчĕç. Конкурс условийĕсене тивĕçтермен пирки пĕрремĕш вырăна никама та памалла мар тесе йышăннă. Иккĕмĕш вырăна Ситуккассинчи Р.Ф. Ордикова хуçалăхĕ тухма пултарчĕ, 2 пин тенкĕне тивĕçрĕ. Виççĕмĕш вырăнта – Кашмаш ялĕнчи С.С. Шапошникова хуçалăхĕ. Конкурс условийĕсемпе ăна 1 пин тенкĕ пама йышăннă.

**– «Чечек пуххисемпе кану кĕтесĕсене илем кĕртесси» номинацире ăмăрту итогĕсем еплерех тата?**

– «Чечек пуххисемпе кану кĕтесĕсене илем кĕртесси» номинацире те ăмăрту хĕрӳ иртрĕ. Кунта пĕрремĕш вырăна Кашмаш ялĕнчи В.И. Ярикова пама йышăннă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Малиновка лесничествин Шупуçĕнчи кордонĕпе (1 пин тенкĕ) Йӳçкассинчи ветерансен интернат çурчĕ (500 тенкĕ) пайланă.

**– Георгий Георгиевич, уйрăм номинацисенче çĕнтерӳçĕсене палăртман тĕслĕхсем татах пур-и?**

– Çапла, «Организацисен уйăрса панă лаптăкĕсене, санитарипе хӳтĕлев зонисене тата вĕсем çывăхĕнчи лаптăксене симĕслетесси тата тирпей-илем кĕртесси» номинацире те никама та çĕнтерӳçĕсен шутне кĕртмен. Сăлтавĕ – материалсем тăратманни.

**– Юлашкинчен тата мĕн каласа хăварнă пулăттăр?**

– Çавна кăна калама пултаратăп. Паллă ĕнтĕ, конкурссем ирттерни кирлĕ. Вĕсем çынсене хавхалантарма тивĕç. Анчах та çавна манас марччĕ. Хамăр тавралăхри илем, тирпейлĕх вăл хамăршăнах кирлĕ. Çавăнпа та вăл вăхăтран вăхăта пулса пымалли тата такам валли туса иртерекен ĕç мар. Тирпей-илемшĕн кашнин тата куллен тăрăшас пулать.



**Сăн ӳкерчĕксенче: «Чи лайăх пурăнмалли уйрăм çурт» номинацире виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашри С.С. Шапошникова хуçалăхĕ; «Чечек пуххисемпе кану кĕтесĕсене илем кĕртесси» номинацире Кашмашри Яриковсен кану кĕтесне çитекенни пулмарĕ. Çемье членĕсем кунта ĕç хыççăн канма пухăнаççĕ, хăйсен юлташĕсене чĕнеççĕ.**

Юбилей

# Поэзи çунатти çинче

Пирĕн хаклă юлташăмăр, çывăх тусăмăр, поэзи анине ăнăçлă кăпкалатакан, юрă-кĕвĕ, ташă ăсти **Петр Васильевич ВОРОБЬЕВ** 60 çул тултарчĕ.

Эпир ăна ырлăх-сывлăх, телей, çемьере килĕшӳпе тату пурнăç, творчествăра çĕнĕ ӳсĕмсем сунатпăр.

**"Янаш" юрăпа ташă ансамблĕ, тусĕсем.**



**ШĂНКĂРТИ ШЫВ ЮХАТЬ**

Кĕвви Ю. Жуковăн

Шăнкăрти шыв юхать
Пĕрлешме мăн шывпа.
Тен кун-çулĕ шăвать
Астарать çĕн кунпа.

Юхан шывĕ çавах,
Тӳпере çăлтăрсем.
Тусăм, эс асăмрах,
Асăмра иртнисем.

Юрату çуралать,
Ăнсăртран тĕл пулсан.
Çăл куç пек туйăнать,
Пĕр-пĕриншĕн çунсан.

Юрату çухалать,
Чун ăшши пулмасан.
Пĕр-пĕрне хакласа,
Чĕрере тытмасан.

Кĕркунне кайăксем
Кăнтăра çул тытаç.
Çурхи кун çĕнелсен,
Юрăсем шăратаç.

Пĕрре чун сивĕнсен,
Вăл текех илĕртмест.
Юратма пĕлмесен,
Телей темшĕн килмест.

**АСА ИЛ**

Кĕвви Р. Петровăн

Шурă юр шăппăн сасă паратчĕ
Икĕ мăшăр ура айĕнче.
Сан куллу ĕмĕтсем çурататчĕ
Тăнă чух кил хапхи çумĕнче.
Аса ил, аса ил, аса ил
Эпĕ сан, эсĕ ман пулнине.
Аса ил, аса ил, аса ил
Пĕр-пĕриншĕн чунсем çуннине.
Çеçпĕлсем ешерсен еплерехчĕ
Кайăксен юррипе киленме,
Çут пуласлăх малта илĕртетчĕ
Юрату пуçлансан хĕмленме.
Аса ил, аса ил, аса ил
Эпĕ сан, эсĕ ман пулнине.
Аса ил, аса ил, аса ил
Пĕр-пĕриншĕн чунсем çуннине.
Акă эс аякра, тек çырмастăн,
Çав каçсем асран тухрĕç-ши сан?
Чăнахах-ши эс, тусăм, туймастăн,
Çак юрра аса ил юратсан.
Аса ил, аса ил, аса ил
Эпĕ сан, эсĕ ман пулнине.
Аса ил, аса ил, аса ил
Пĕр-пĕриншĕн чунсем çуннине.

**МОЙ СУНДЫРЬ**

Музыка Р. Петрова

Заалел закат звеня,
Знаю, ждет Сундырь меня:
Липами, березами,
Судьбами серьезными.
Припев:
А – а – а
А – а – а
Мой Сундырь,
Мой родной,
В сердце ты
Вечно мой.
Медленно луна плывет,
Звездами река цветет.
Пар клубится над водой,
В мыслях я, Сундырь, с тобой.
Припев:
Рощи, парк – чудесный край.
Ты, Сундырь, меня встречай
Улицами чистыми,
Светлыми, лучистыми.
Припев:
Прожито немного лет,
Но тебя дороже нет.
Мы навечно связаны
И тебе обязаны.
Припев:
А – а – а
А – а – а
Мой Сундырь,
Мой родной,
В сердце ты
Вечно мой.

Вĕрентӳ учрежденийĕсенче

# Лицеистсен ретне илчĕç



Кăçал Муркаш район администрацийĕпе И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш Патшалăх университечĕ хушшинчи килĕшӳпе уçăлнă лицей çичĕ çул тултарчĕ. Çак тапхăрта миçе яшпа хĕр аслă пурнăç çулĕ çине тăмарĕ-ши? Кунта хăнăхнă йăлапа çулсеренех вуннăмĕш класа вĕренме килнисене лицеистсен ретне илеççĕ. Октябрĕн 20-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнчи зала тĕслĕ шарсемпе илемлетнĕ, лăпкă кĕвĕ янăрани уяв кунне татах та савăклатрĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа иккĕмĕш уйăх пырать ĕнтĕ. Лицея вĕренме кĕнĕ хĕрсемпе каччăсем кунти пурнăçа хăнăхни самай палăрать. Уява пуçланă май сцена çинче вуннăмĕшсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Аслă пĕлӳ тĕнчине утма кунта тĕрлĕ шкулсенчен пухăннă. Чăнах та кунта чи маттуррисем, чи пултаруллисем килнĕ иккен.

Числă, тивĕçлĕ пулмалла: çĕршывшăн тăрăшмалла, ăна шанмалла, юратмалла, унăн çутă кун-çулĕшĕн ăс-тăна çивĕчлетмелле, малашлăха анлă çул хывмалла. Çавăн пек шанчăклă сăмахсене тĕпе хурса тупа турĕç вуннăмĕшсем. Вуннăмĕшсем вара вĕсене çирĕп йăлапа пыракан символла тăваткал калпаксем тăхăнтартрĕç. Лицей директорĕ Николай Евгеньевич Смирнов лицеистсен шутне кĕнине çирĕплетекен удостоверенисем пачĕ, ăшă сăмахсем каларĕ.

– Эсир пирĕн лицея суйласа илни, вĕренме килни хăех пысăк ĕç пулнине палăртать. Çак аслă çула тухма хăраса тăмарăр пулсан, эсир пурнăçри хăвăр тĕллевĕрсене пурнăçлама пултаратăрах пулĕ тетĕп. Паян эпĕ вуннăмĕшсене лицеистсем пулнине çирĕплетекен удостоверенисем патăм, сирĕн вара лицейран вĕренсе тухса аллăрсене çӳллĕ шайри тивĕçлĕ документа илмелле пултăр. Апла пулсан, сирĕн вĕренмелле, тăрăшмалла, пурнăç çулĕ çине тухма ăнтăлмалла. Аслă пĕлӳ тĕнчинче çулăрсем такăр, чăрмавсăр пулччăр! – терĕ ăшшăн саламласа.

Çапла вара лицейăн гуманитарипе техника пĕлĕвĕсен класĕсене 26-шар ача хутшăнчĕ. Кăçалтан пуçласа кунта пĕрремĕш хут 7 лицеиста кадетсен шутне илчĕç. Савăнăçлă самантра Раççейĕн Гимнĕ янăрарĕ. Вĕсем кашниех çĕршывшăн тăрăшма, унăн чысне хӳтĕлеме тупа турĕç. Кадетсен йышне районти çар комиссарĕн çумĕ Д.Н. Захаров йышăнчĕ. Çавăн пекех вăл ăшшăн саламларĕ, çĕршывшăн юрăхлă çын пулма чĕнсе каларĕ.

Е.И. Плечов, милици подполковникĕ пулнă май, кадетсене ырларĕ. "Çакă вăл ырă пулăм. Сирĕн пурин те, вĕренĕве ăнăçлă вĕçлесе, алла диплом илсе тăван района таврăнмалла. Саккунсене аван пĕлмелле. Муркаш халăхĕшĕн, ăна хӳтĕлессишĕн тăрăшмалла", – терĕ вăл.

Çавăн пекех район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методкабинечĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова, ашшĕ-амăшĕсем çĕнĕ лицеистсене ăшшăн саламларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: лицей директорĕ Н.Е. Смирнов удостоверенисем панă самантра; аслă пĕлӳ тĕнчине утакансем.**

